25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮНЬ
26
ЭРНЕКУН
147 (6082) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Утă çулса пухас ĕçе пысăк пахалăхпа туса ирттерер

Колхозсен общественнăй выльăх-чĕрлĕхĕ [illegible] çулталăк [illegible] пырать. Иртнĕ 1941 çулта пирĕн республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕхĕн [illegible] продуктивноçне [illegible] ÿстерни [illegible]. Нумай колхозсене [illegible] выльăх-чĕрлĕх [illegible] фермисем организациленĕ.

1942 çулта партипе правительство пур пĕрле выльăхсен йышне тата та ытларах ÿстерме палăртрĕç. [illegible] çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл [illegible]. Пурнишĕн те паллă, выльăх-чĕрлĕхсен йышне ÿстерме, вĕсен продуктивноçне [illegible] малалла [illegible] выльăх апачĕ [illegible]. [illegible] Çавăнпа та халĕ çитĕ утă çулма пуçтарас ĕçе [illegible] ирттерме тăрăшмалла, выльăхсен [illegible] тăрлĕхе хатĕрлемелле.

Утă çулса пуçтарас ĕç, тырăсене вырса пухас ĕç пекех, пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кăна пирĕн кăçал уйрăмах лайăх туса ирттермелле. Мĕншĕн тесен, кăçал пирĕн колхозсен Хĕрлĕ Çарăн утлă çарне те нумай тата паха утă туса памалла пулать.

Республикăн хăшпĕр районĕсенчи малта пыракан колхозсем клевер, люцерна çулма тытăнчĕç. Чкаловски районри «Çăлтăр», «Хĕрлĕ Октябрь», «Канаш» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем выльăх апачĕ тума акнă люцернăна çулма тытăннă. Сталин ячĕпе тăракан колхоз паянхи куна 35 гектар люцерна çулнă. Çуракинчи пекех, утă çулас ĕçре те, колхозниксем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. «Çăлтăр» колхозри Иустиния Козлова юлташ ертсе пыракан бригада утă çулнă çĕрте уйрăмах пысăк пахалăхпа ĕçлет. Колхозницăсем пĕр кун хушшинче 5 гектар ытла люцерна çулнă. Çĕмĕрле районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз утă çулма звеносем организациленĕ. Июнĕн 22-мĕшĕнче вĕсем утă çулма йĕркеллĕн хатĕрленсе тухрĕç. Пĕр кун хушшинчех колхозниксем 10 гектар утă çулса пăрахрĕç.

Малта пыракан колхозсен примерĕпе республикăри пур колхозсен те утă çулма вăхăтра, йĕркеллĕ тухас пулать. Кашни колхозăн тата пур машинно-тракторнăй станцисен те сенокосилкăсемпе тата утă пуçтаракан машинăсемпе ĕçре туллин усă курмалла, ĕçĕн хăвăртлăхне ÿстерме улăхсене бригадăсене уйăрса памалла, ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла. Çак хушăрах силос хывса хăварас тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлемелле.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Бюровĕ «Утă çулма хатĕрленессипе ăна пухса кĕрессисинчен тата выльăхсем валли сĕтеклĕ апат хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, райсовет исполкомĕсен председателĕсене, МТС директорĕсене тата колхозсен председателĕсене утă çулса пухас ĕçе организованно туса ирттерме хушать. Июлĕн пĕрремĕшĕнчен кая юлмасăр утă пухмалли машинăсене, çавасене тата вак-тĕвек инвентарьсене юсаса çитерме, силос шăтăкĕсене çĕнĕрен чавма е юсаса хума хушнă. Апса тунă курăксĕн тухăçлăхне ÿстернĕшĕн, улăхсенчи курăксемпе тымар-çимĕçсен тухăçлăхне ÿстермелли плана хăйсене çирĕплетсе панă участоксенче ирттерсе тултарнăшăн çав культурăсен планран ирттерсе пухса кĕнĕ хисепĕнчен виççĕмĕш пайне, ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх, колхозниксене валеççе памалла тунă.

Çавăн пекех ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени тăрăх колхоз правленийĕсен государствăна памалли утта çулса пуçтарнă хыççăнах, капана хывиччен хатĕрлев организацийĕсене леççе памалла тунă. Çак ĕçе тума колхозниксене уйăрса çирĕплетмелле, вĕсене кирлĕ таран лашасем уйăрса памалла тата çак ĕçе ертсе пыма пĕр ответлă çын уйăрса хумалла.

Утă çулма тухас вăхăт çитсе килчĕ пулсан та, хăшпĕр районсенче утă çулмалли машинăсемпе инвентарьсене халĕ те хатĕрлесе çитермен-ха. Сăмахран, Советски районра 14 сенокосилкăран 7-ĕшне кăна юсаса ĕçе кăларма хатĕрленĕ.

Утă çулса пухас ĕçе тивĕçлĕ хак памаснине халех пĕтермелле. Районри çĕрĕç органĕсенчи работниксем, колхоз председателĕсем утă çулас ĕçе организованно ирттерессишĕн ответлă пулса тăраççĕ. Кашни колхозăннах кăçал утă ытларах çулса пухма тăрăшмалла, вăхăтра пуçтарса капансене хывса хăвармалла, вĕсене вут-кăвартан тата тургкаласа пĕтерессинчен сыхлас ĕçе организацилемелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 24-мĕшĕнче Харьков енче пирĕн войскăсем противникăн наступлени тăвакан войскисене хирĕç çапăçнă.

Фронтăн Севастополь участокĕнче пирĕн войскăсем противникăн [illegible] атакисене сирсе пăрахнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле [illegible] пулман. [illegible] 4.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Июнĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 36 танкне, войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 95 автомашинине, 10 мотоциклне, боеприпассем тиенĕ 30 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, противникăн полевой тата зенитнăй артиллерийĕн 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 5 ротăна çити тата утлă çарăн пĕр эскадронне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче пирĕн войскăсем нимĕçсен чылай танксем пулăшса пынипе наступлени тăвакан пехотин атакисене сире-сире янă. Пирĕн чаçсем çапăçусенче гитлеровецсене чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк сухатусем кÿнĕ. Тепĕр участокра Заболоцкий командирăн подразделенийĕ кун каçиччен противникăн темиçе атакине сире-сире пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен нумай виллисем выртса юлнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн артиллеристсем противник артиллерийĕн 4 батарейине, миномет-сен 4 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче участокĕсенчен пĕринче хĕрешекен пирĕн часть икĕ кун хушшинче нимĕçсен 10 ДЗОТне çĕмĕрнĕ, противникăн пĕр орудине, темиçе пулеметпе минометне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 250 çын ытла вилсе пĕтнĕ.

* * *

Сурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче противникăн тылĕнче кĕрешекен боецсен группи противникăн чугунçул тăрăх пыракан 2 эшелонне ÿлĕнтерсе янă. Икĕ паровоз, боеприпассем тиенĕ 9 вагон, инженернăй пурлăх тиенĕ 7 вагон тата танксем тиенĕ 6 платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Л. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Киев облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, нимĕçсен пысăк карательнăй отрядне хирĕç виçĕ кун хушши çапăçнă. Каялла чакса пырса, партизансем гитлеровецсене шурлăх вырăналла илсе кĕрсе кайнă та вĕсене виçĕ енчен пырса çапнă. Совет патриочĕсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 86 çынна пĕтерсе тăкнă, пĕр танкетка, 6 автомашина çунтарса янă тата противникăнне 3 автомашина, 4 станковăй, 6 ручной пулемет, винтовкăсемпе автоматсем 100 яхăн, радиостанци тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 95-мĕш пехотнăй дивизийĕн 279-мĕш полкĕнчи 7-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ унтер-офицер Пауль Дютринг çапла каласа панă: «9 уйăх хушшинче пирĕн ротăна вунă хутчен çынсем хушса пачĕç. Пĕлтĕр манпа пĕрле вырăссен чикки урлă каçнă 170 салтакран 20 салтак кăна тăрса юлнă. Вĕсенчен вуннăшĕ нумаях пулмасть госпитальрен таврăнчĕç. Вĕсем çурма-инвалид пулса юлнă тĕрĕсем вĕсем çак [illegible] юрăхсăр».

* * *

Венгрин 35-мĕш пехотнăй полкĕнчи тыткăна лекнĕ салтак Симон Ш. çапла каласа панă: «Пирĕн полк тĕрлĕ национальноçсенчен тăрать. Унта румынсем 30 проценчĕ яхăн, сербсемпе русинсем тата хорватсем 10 проценчĕ [illegible]. Ыттисем — венгерсем. Нумай пулмасть Германи командованийĕ нимĕçсен войскисене малти линирен каялла куçарчĕ, ун вырăнне унта Венгри чаçĕсене кĕртсе ячĕ. Çакăн пирки полкра ÿпкелешме тытăнчĕç. Салтаксем çапла калаççĕ: «Нимĕçсем пире вилме хăвалаççĕ, хăйсем пирĕн çурăм хыçĕнче вырнаçнă та кашни каялла чакакана пере-пере пăрахаççĕ», теççĕ. Венгри офицерĕсем те нимĕçсен командованийĕ тăвакан ĕçсем пирки тарăхаççĕ, хăйсем тарăхнине уççăнах кăтартса параççĕ. Эпĕ — серб. Фронта тухса килес умĕн атте мана çапла каласа ячĕ: «Вырăссем — пирĕн тăвансем. Май килсенех эсĕ тыткăна парăн, вара чĕрĕ юлăн. Асра тыт, пирĕн тăшмансем венгерсемпе нимĕçсем пулнă, халĕ те вĕсем тăшмансемех пулса тăраççĕ. Вырăссем — пирĕн туссем», терĕ. Май килсе тухсанах эпĕ атте панă канаша пурнăçа кĕртсе вырăссен аллине тыткăна парăнтăм».

* * *

Франци патриочĕсем, Лаваль ушкăнĕн сутăнчăкла ĕçĕсене пăхмасăрах, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç кĕрешĕве сайлатса пыраççĕ. Нумаях пулмасть Марвильри тата Компьенри авиаци хирĕсенче 5 ангара, вĕсенчи материалсемпе пĕрлех, çунтарса янă. Шамблире нимĕçсемшĕн ĕçлекен электростанцие сирпĕнтерсе янă. Пантенра нимĕçсен отрячĕ çине граната пăрахнă. Взрыв пулнипе нимĕçсен 10 салтакĕ вилнĕ.

Июнĕн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Харьков енче пирĕн войскăсем противника хирĕç çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Севастополе хÿтĕлекенсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте тĕнче халиччен курман геройлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Потапов юлташ командир пулса тăракан чаçри пĕр подразделенин боецĕсем противникăн 18 атакине сирсе пăрахнă, 350 гитлеровецпа тата нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн пехотинецсемпе краснофлотецсем тата артиллеристсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешеççĕ. Старши сержант Хасанов юлташ пулеметран персе нимĕçсен пехотине пĕр взвода çити пĕтерсе тăкнă. Краснофлотец-связист Сегеденко юлташ противникăн танкĕ патне шуса пынă та ун çине çунакан шĕвек тултарнă бутылка пăрахса вут хыптарнă. Кĕçĕн лейтенант Павловский юлташ пулеметран персе нимĕçсен 2 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник пехотин пĕр батальонĕ, танксем пулăшса пынипе, Гребницкий командирăн гвардейски подразделенине атакăланă. Гвардеецсем тăшман çине пур тĕрлĕ хĕçпăшалсенчен те харăссăн пеме тытăннă. Вăйлă çапăçу хыççăн гитлеровецсем каялла чакнă, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çынна çити вилсе пĕтнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Морозов юлташ командир пулса тăракан чаçри кавалеристсем нимĕçсен танкне, 4 орудине, 2 минометне, 6 пулеметне тата 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 9 бомбардировщикĕ Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем вырнаçса тăнă çĕре бомбăсем пăрахма хăтланнă. Пирĕн зенитчиксем пеме тытăнса «Юнкерс-88» йышши 2 самолета ÿкернĕ. Нимĕçсен ытти самолечĕсем хăйсен бомбисене пĕр тĕлли-паллисĕр пăрахнă та тарса пытаннă.

* * *

Бовкун юлташ командир пулса тăракан чаçри снайперсем юлашки тăватă уйăх хушшинче 847 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Лейтенант Изегов юлташ 144 гитлеровеца, красноармеец Орлов юлташ — 125, старшина Якунин юлташ — 120 гитлеровеца, старши сержант Гаврилов юлташ нимĕçсен 96 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссири партизанĕсен ăнăçлă кĕрешĕвĕ çинчен хыпар илнĕ. Партизансен Р. юлташ командир пулса тăракан отрячĕ нимĕçсен штаб машинине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен генералне, 10 офицерне тата 4 салтакне вĕлернĕ. Партизансем 2 пулемет, винтовкăсемпе штаб документчĕсем тытса илнĕ. Партизансен 4 отрячĕ, пĕрле çыхăнса кĕрешсе, гитлеровецсен карательнăй экспедицине çапса аркатнă. Партизансем çапăçусенче противникăн 3 офицерне тата 72 салтакне пĕтерсе тăкнă. Белоруссири партизанĕсен отрячĕсенчен пĕри нимĕçсен фронта горючи турттарса пыракан чугунçул эшелонне сирпĕнтерсе янă. Пушар тухса 6 сехет хушши çуннă. Çав çулпа поездсем çÿрессии чарăнса ларнă.

* * *

Нимĕçсен 212-мĕш пехотнăй дивизийĕн 473-мĕш полкĕнчи 4-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Георг Эйхельдингер çапла каласа панă: «Эпĕ нумай мар вăхăт хушши Кенигсбергра лазаретра выртрăм. Унта эпĕ нимĕç салтакĕсем оккупациленĕ совет районĕсенче мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарни çинчен нумай илтрĕм. Хĕрарăмсенчен мăшкăллани çинчен, вĕсене ирĕксĕрлесе, пусмăрласа асаплантарнисем çинчен салтаксем хăйсемех каласа паратчĕç. Ун чухне эпĕ çав сăмахсене ĕненмерĕм. Кайранрах çав ирсĕр япаласене манăн хам куçпах курма лекрĕ. Стрельна ялĕн коменданчĕ обер-лейтенант Каспар ялти çынсене мĕнле тискеррĕн асаплантарни çинчен эпĕ пĕлетĕп. Салтаксем ялти халăха çарататчĕç, тем тĕрлĕ мăшкăллатчĕç. Обер-ефрейтор Фасселд тата 9-мĕш ротăн писарĕ ефрейтор Макс Швальд уйрăмах тискерленетчĕç. Çав ирсĕрсем вĕсен куçĕ тĕлне кам лекнĕ, çавсене пурне те тискер кайăкла асаплантаратчĕç».

* * *

Германия ирĕксĕрлесех Румыние чуралла çĕнĕ килĕшÿ тутарттарнă. Çав килĕшÿ тăрăх Гитлерăн Румынири тарçисем юлашки апат-çимĕçсене нимĕçсене пама пулнă. Çавна май жандармсен ятарласа тунă отрячĕсем ялсенче талккишĕпех ухтарса çÿреççĕ, хресченсенчен мĕн тупнă пек выльăх-чĕрлĕхсене, тырпулсене илсе тухса каяççĕ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Кашни кун çĕнĕ çитĕнÿ

КАНАШ. (Телефонпа). Социализмлă ăмăртура вагонсем юсакан заводри стахановла бригадăсем кашни кун çĕнĕ çитĕнÿ тăваççĕ. Высотский юлташ ертсе пыракан столярсен бригади июнĕн малтанхи çуррине заданисене ытлашшипех тултарса ĕçлерĕ, хальхи кунсенче сменăри нормăна вăтамран 180-шар процент тултарса пырать. Бригада çак уйăхра вагонсем юсас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăна часах пурнăçлать. Чесов, Капелюха тата Чернухин юлташсен бригадисем те вагонсем юсамалли графика кулленех ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Чесов бигадинчи столяр М. Смагин, Капелюха бригадинчи слесарьсем М. Мироненко, Ф. Селезнев юлташсем нормăна кашни кун 185-шер процент пурнăçлаççĕ.

Цехсем хушшинчи ăмăртура яланхи пекех Токарев юлташăн цехĕ малта пырать. Кунта талăкри графика кашни рабочи тултарнă май, çĕнĕрен çĕнĕ стахановецсем хутшăнаççĕ. Станочниксем Ефремова, Костин, Смоловик, Шумилова, Ищенко, Кисина юлташсем, кунтаранчен нормăна 100—105-шер процент тултарса пынă пулсан, çак кунсенче 150-шар процент тултарса пыра пуçларĕç.

Соколовский юлташ начальник пулса тăракан цех та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Талăкри график кунта пурнăçа кĕрсе пырать. Уйрăмах Егорушкин юлташăн смени графика çирĕппĕн пурнăçлать. Сменăри рабочисенчен Зуев, Федоров, Муханов юлташсем 3—4-шар норма, Карпеева, Абрамова, Цыганчук юлташсем 2—3-шер норма тултараççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Ăмăрту пулăшрĕ

ВĂРНАР. (Телефонпа). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăниччен фосфорит завочĕ начар ĕçлетчĕ. Кăçал вăл 5 уйăх хушши плана тултарайман. Июнĕн пуçламăшĕнче завод коллективĕ социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ, кутаранчен пулнă çитменлĕхсене шута илсе хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетрĕ. Рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем фосфорит ытларах кăларассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухрĕç. Агитаторсем рабочисем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне сарса ячĕç. Çакăн хыççăн коллектив лайăхрах ĕçлеме, завод фосфорит кăлармалли плана куллен тултарса пыма пуçларĕ. Завод уйăхри ĕç планне июнĕн 15-мĕш тĕлне 65 процент тултарнă. Васкавлă заказсем пурнăçламан цех талăкри заданине вăтамран 200 процент тултарса ĕçлет. Чылай рабочисем хăйсен нормисене ăнăçлăн тултараççĕ. Уйрăмах Назардинова, Тимофеева, Миронова работницăсем ĕçĕн пысăк тухăçлăхĕсене кăтартаççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Чугунçула лайăх пăхса тăраççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Чугунçул работникĕсем социализмлă ăмăртура хăйсен ĕçĕсене лайăхлатсах пыраççĕ. 5-мĕшпе 6-мĕш участоксенче ĕçлекенсем чугунçула лайăх пăхса тăрассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухнă. Ăмăртура халĕ 5-мĕш участокра ĕçлекенсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кунти рабочисенчен Алексеев, С. Шуранов, А. Литонин, Е. Пензина тата М. Шапкина юлташсем çул юсамалли нормăна куллен 140-шер процент тултараççĕ.

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

124. Евдокия Ивановна **Тигенева**—Улатăр МТС-ĕн трактористки. Тигенева юлташ тракторпа малтанхи çул ĕçлет. Çапах та, СТЗ тракторпа ĕçлесе вăл ĕçĕн 10 сменинче 44 гектар сухаланă, нормăна 115 процент тултарса пынă, 103 килограмм горючи перекетленĕ.

125. Иван Петрович **Владимиров** — Улатăр МТС-ĕн трактористчĕ. Владимиров юлташ тракторпа малтанхи çул ĕçлет. Çапах та ХТЗ—НАТИ тракторпа ĕçлесе вăл çуракинче хăйĕн сменинче 132 гектар сухаланă, заданирен 42 гектар ытлашши тунă.

126. Семен Константинович **Краснов**—Улатăр МТС-ĕн трактористчĕ. Краснов юлташ урапаллă СТЗ тракторпа ĕçлесе, 11 сменăра 56 гектар сухаланă. Вăл сменăри нормăна 6-шар гектара çити тултарса пынă, планпа кăтартса панă норма 4,2 гектар. Çураки вăхăтĕнче Краснов юлташ 210 килограмм горючи перекетленĕ.

127. Александр Иванович **Абликов** — Улатăр МТС-ĕн трактористчĕ. Абликов юлташ газогенераторлă ХТЗ—НАТИ тракторпа ĕçлесе çуракинче 13 кун хушшинче 93 гектар сухаланă, кулленхи нормăна 130 процент таран тултарса пынă. Абликов юлташăн çуракинчи мăнпур ĕçсен пахалăхĕ те лайăх пулнă.

128. Григорий Кузьмич **Савельев**—Улатăр МТС-ĕн трактористчĕ. Савельев юлташ ХТЗ—НАТИ тракторпа ĕçлесе малтанхи 10 кун хушшинчех 65 гектар сухаланă, вăл кунсеренех, планра кăтартса панă 5,7 гектар вырăнне, 6,5 гектар сухаланă, 405 килограмм горючи перекетленĕ.

129. Первомайски МТС-ĕнчи **тракторсен бригади** (бригадирĕ **Ф. В. Козлов** юлташ). Козлов юлташăн бригади тракторсен çурхи ĕçсен планне майăн 27-мĕш тĕлнех 108 процент тултарнă, 200 килограмм шĕвек горючи тата 2.000 килограмм газогенераторлă тракторсен топливине перекетленĕ.

130. Наталия **Мефодьева**—Первомайски МТС-ĕн трактористки. Мефодьева юлташ СТЗ—НАТИ тракторпа ĕçлесе çурхи ĕçсен планне майăн 27-мĕш тĕлнех 138 процент тултарнă, 45 килограмм горючи перекетленĕ.

131. Василий **Леонов** — Первомайски МТС-ĕн трактористчĕ. Леонов юлташ СХТЗ тракторпа ĕçлесе çурхи ĕçсен планне майăн 27-мĕш тĕлнех 100,4 процент тултарнă, газогенераторлă тракторсен топливине 750 килограмм перекетленĕ.

132. Павел Петрович **Корнилов**—Первомайски МТС-ĕн трактористчĕ. Корнилов юлташ ХТЗ—Т2Г тракторпа ĕçлесе çурхи ĕçсен планне майăн 27-мĕш тĕлнех 137 процент тултарнă, 800 килограмм газогенераторлă тракторсен топливине перекетленĕ.

Çĕртме тăвас тата 1942 çулта кĕрхи тырăсене акма çĕрсене сухаласа хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен

ВКП(б) Чăваш Обком бюровĕн постановленийĕ

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртать: **кăçалхи çул суркунне кая юлса килнине пула 1943 çулта туса илмелли кĕрхи тырăсене акмашкăн çĕртме сухи тума кирлĕ вăхăт чылай кĕскелчĕ. Анчах ВКП(б) хăшпĕр райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсем чĕрĕ туртăм вăйĕпе тракторсене çĕртме сухи тăвас ĕçе вăхăтра куçарман, çавăнпа та çĕртме тăвас плана пурнăçа кĕртмен.** Çапла, таса çĕртме тăвас плана июнĕн 20-мĕш тĕлне Пăрачкав районĕ — 16,9 процент, Шăмăршă районĕ — 17,3 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Çавăн пекех Кувакино, Улатăр тата Куславкка районĕсем те питĕ кая юлса пыраççĕ. Ку районсем иртнĕ çулта çак вăхăт тĕлне çĕртме сухи туниччен 2—3 хут сахалтарах сухаланă. Пĕтĕмпе республикипе июнĕн 20-мĕш тĕлне çĕртмене 48 процент чухлĕ кăна сухаланă.

Чăваш АССР кăçал çĕртме тăвассипе ытла та кая юлса пынă çинчен, çĕртме тăвасси çавăн пек кая юлни кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăварас ĕçре тата вĕсен тухăçлăхĕ тĕлĕшпе пысăк хăрушлăх кÿме пултарасси çинчен ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăтартса панине ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ питех те тĕрĕс тесе шутлать. Çĕртме тăвас тĕлĕшпе малашне пĕр куна та сая яма юрамасть.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнать:**

1. ВКП(б) райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсене колхозсен чĕрĕ туртăм вăйне (инçетри пунктсенчен тырпул турттарас ĕçе янисемсĕр пуçне), МТС-сен тата совхозсен тракторĕсене халех çĕртме тăвас ĕçе яма хушас, — кашни колхозра тата совхозра кашни тракторăн тата чĕрĕ туртăм вăйĕн мĕн чухлĕ çĕртме тумаллине кăтартса заданисем памалла.

2. Çĕртме тунă çĕрте чĕрĕ туртăм вăйĕпе туллин усă курас шутпа, колхозсемпе совхозсен уйрăм вак ĕçĕсенче лашасене сахалтарах ĕçлеттерсе, лашасемпе сменăсем тăрăх ĕçлессине организацилемелле.

3. Çĕртме сухи тăвас тĕлĕшпе районсене панă пилĕк кунлăх заданисене çирĕплетес тата таса çĕртме сухине туса пĕтерме çакăн пек срoксем палăртас: Вăрнар, Ишлей, Калинински, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Шăхасан, Етĕрне районĕсем тата Шупашкар хули тăрăх — 1942 çулти июлĕн 1-мĕшчен, Пăрачкав тата Кувакино районĕсем тăрăх — июлĕн 10-мĕшчен, ытти районсем тăрăх — июлĕн 5-мĕшчен çĕртме туса пĕтермелле.

4. ВКП(б) райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсене çĕртме пуссисене, уйрăмах мĕнпе те пулин йышăннă çĕртме пуссине, тислĕк тата вырăнти ытти удобренисем тăкассине пурнăçа кĕртме хушас, çав ĕçсене тума пуринчен ытларах хĕсĕр ĕнесемпе тата çамрăк ĕне-выльăхсемпе усă курмалла.

5. Тăпрара нÿрлĕх тытас шутпа, сухаланă хыççăн сÿремелле тата çĕртме уйĕсене малашне кăпка усрамалла, çумкурăксенчен тасатсах тăмалла.

6. ВКП(б) райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсене, таса çĕртме тумалли плана тултарнă хыççăн, 1942 çулта кĕр тыррисем акмалли ытти мĕншур çĕрсене, вĕсем çинчен тырпулсене пухса кĕртнĕ май, сухалас ĕçе çийĕнчех организацилеме тата вĕсене 1942 çулти июлĕн 25-мĕшчен сухаласа пĕтерме хушас.

ВКП(б) Обкомĕн Секретарĕ
И. ЧАРЫКОВ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР Верховный Советне суйламалли срока куçарасси çинчен

Вăрçă вăхăтĕнчи обстоятельствăсене кура Чăваш АССР Верховный Советне суйламалли срока пĕр çулталăклăха куçарас.

Чăваш АССР пĕррремĕш созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсене çав сроклăха тăсас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăвакане.
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти июнĕн 25-мĕш.

МТС-семпе колхозсенчи социализмлă ăмăрту

Ăмăртăва активлăн хутшăнçĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Мăн Шетмĕ ялсоветĕнчи «Красный Пордежер» колхоз членĕсем, Новосибирск облаçĕнчи «Путь Крестьянина», Алма-Ата облаçĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем пысăк çĕкленӳллĕ çутсе-явса, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç. Хăйсене ăмăртма чĕнни «Красный Пордежер» колхоз членĕсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илес-шĕн кĕрешеççĕ. Тĕштырăсене вĕсем планпа палăртнинчен 10 процент ытларах туса илме, тырăсене вырса пухас тата çапса пĕтерес ĕçе 20 кун хушшинче пĕтĕмĕшпех вĕçлеме обязательство илчĕç. Çак илнĕ обязательствăсене пурнăçласшăн халĕ кашни колхозник колхоз производствинче пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Паянхи куна вĕсем 126 гектар çинчи тырăсене çумкуракран тасатнă.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн

СОВЕТСКОЕ. Чемĕри «Сеятель» колхоз района малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Кунта колхозниксем [illegible]. Иртнĕ çулта вĕсем кашни гектартан вăтам шутпа 17,7 центнер тĕштыра туса илнĕ, çĕрулмине [illegible] культурăсене те планпа палăртнинчен ытларах туса илнĕ.

Кăçал та колхозниксем тырпул тухăçне ӳстерес тесе хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

«Эпир кăçал кашни гектартан 120 пăт тĕштыра туса илессине тата кантăр-вăрине гектар пуçне 27 пăт вырăнне 48 пăт, çĕрулмине 671 пăт вырăнне 1000 пăт, клевере 9 пăт вырăнне 20 пăт туса илессишĕн хĕрӳллĕн ĕçлесе пулса социализмлă ăмăртăва хутшăнатпăр», терĕç вĕсем. Халĕ çак обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе хĕрсе ĕçлеççĕ.

Социализмлă ăмăртăва хутшăннă май колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлас тĕлĕшпе [illegible] 1942 çулти обязательствăна [illegible] çĕлĕ, тулă, пăрçа, вир, кантăрвăрри 100 процентчен парса татрĕç. [illegible] сĕт-çу, çăм, тир обязательствисене те июнĕн 1-мĕшĕнче пĕтĕмĕшпех парса татма [illegible].

[illegible]

Ян. СИГАЙ.

ИРХИ ÇĔРТМЕРЕ

ШАХАСАН, июнĕн 22-мĕш. (Телефонпа). Районри машинăпа-тракторлă станцийĕ ирхи çĕртме планне 92 процент тултарнă. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă тракторист [illegible]

[illegible]

В. ВИНОГРАДОВА.

* * *

Июнĕн 20-мĕш тĕлне Хĕрлĕ Чутай машинăпа-тракторлă станцийĕ комбайнсене юсаса çитерчĕ. [illegible]

[illegible]

ЗАХАРОВ, МТС политпайĕн начальникĕ.

ШКУЛ АЧИСЕМ ПУЛĂШРĔÇ

Шăхасан районĕнчи Шăмăр ялсоветĕнчи «Ахтуба» колхоза шкул ачисем пулăшаççĕ. [illegible] 70 лав салатмалла. Аверьян Васильев вĕрене-

[illegible] çумне тĕр пулса, ытти ачасем те вĕсенчен юласшăн мар.

П. ВОЛКОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пухура çитменлĕхсене çивĕччĕн критикăларĕç

ЕТЕРНЕ. Июнĕн 23-мĕшĕнче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XI-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен парти райкомĕн секретарĕ Г. Спиридонов юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик тата прение тухса калаçакансем районри предприятисем тата промысла артелĕсем, уйрăмах çу заводĕпе спирт завочĕ, япăх ĕçленине палăртрĕç. Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан промысла артелĕ малтанах производство планне ирттерсе тултарса пынă пулсан, юлашки икĕ-виçĕ уйăх хушшинче япăх ĕçленĕ, тăватă уйăхри плана 78 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ.

Район çураки планне 100,3 процент тултарнă. Коммунистсем ертсе пыракан «Родина» (председателĕ Максимова), Мăн Сĕнтĕрти «Комбайн» (председателĕ Михайлов) колхозсем тĕштырăсем акассине 7—8 кун хушшинчех вĕçленĕ. Халĕ çак колхозсем уборкăна хатĕрленес, çум çумлас тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. Анчах районри чылай колхозсем: Мăн Шемертенри «Заветы Ленина», Аттикассинчи «Борец», Палтайри Буденный ячĕпе тăракан колхозсем çуракинчи ĕçсенче кая юлса пынă. Никольскри Ворошилов ячĕпе тăракан тата Иккĕмĕш Ирçери «Комбайн» колхозсем япăх шăтакан вăрлăх акса хăварнă пирки вĕсен çĕр участокĕсене çĕнĕрен пăсса акмалла пулнă. Çак çитменлĕхсене кĕр акинче тума юраманнине тухса калакансем тĕплĕн кăтартса пачĕç.

Çум çумлас, уборкăна хатĕрленес, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсем районра вăраххăн пулса пыраççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсама чылай колхозсенче халичченте тытăнман.

Тухса калакансем МТС начар ĕçленине уйрăмах хытă критикăларĕç. МТС ирхи çĕртме тумалли плана 35 процент кăна пурнăçланă.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме кирлине те пухура кăтартса пачĕç.

Районри çак пысăк çитменлĕхсенчен чылайĕшĕсем пуçламĕш парторганизацисем предприятисемпе колхозсенче партиллĕ-массăллă ĕçе вăйсăрлатнинчен, социализмлă ăмăртăва сарас тĕлĕшпе агитациллĕ ĕçе çителĕксĕр туса пынинчен килеççĕ.

Партин районри пухăвĕ ВКП(б) Обком пленумĕн решенийĕсене ырларĕ, предприятисемпе колхозсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртсе пыма ĕçсыннисене мобилизацилес тĕлĕшпе парторганизацисен партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатма кирлине кăтартса пачĕ, умра тăракан ĕçсене палăртса решени йышăнчĕ.

А. КРАСНОВ.

Бригадир Васса Степанова

Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра коммунистка Васса Степанова 5 çул хушши пĕр татăлмасăр бригадир пулса ĕçлет.

Бригадирăн ĕçĕ колхозра питех те пысăк. Вăл колхоз производствинчи ĕçсене йĕркелекенĕ, колхозниксемпе колхозницăсене ĕçре ертсе пыраканĕ пулса тăрать. Çакăнта Степанова юлташ пысăк пултарулăх кăтартрĕ. Вăл ертсе пынипе колхозниксем кирек хăш ĕçе те лайăх, тĕплĕн туса пыраççĕ.

Степанова юлташ, паянхи ĕçсене лайăх организацилесе пынипе пĕрлех, малашнехи ĕçсене те курса тăрать. Вĕсене пурнăçлама колхозниксене вăхăтра мобилизацилет.

Степанова юлташăн бригадинче ĕçлеме пултаракансем пурĕ 45 çын шутланаççĕ. Вĕсем хушшинче вăйпитти колхозниксемпе колхозницăсем те, ватă çынсемпе çамрăк ачасем те пур. Вĕсем кулленех ĕçре. Ĕçе лайăх организацилеме пĕлекен бригадир кашни çынна ĕçе тĕрĕс вырнаçтарнă. Тĕслĕхрен А. Фомина колхозница бригадăри колхозниксенчен чи асли. Вăл 66 çулта, сывлăх тĕлĕшĕнчен вăл иккĕмĕш группăри инвалид. Васса Степанова ăна яланах çăмăлрах, вăй çитмелле ĕçсем парать. Кăна ватă колхозница туять, ĕçе вăй çитнĕ таран пархатарлăн тума тăрăшать. Нумаях пулмасть вăл итем çинчи улăмсене пуçтарнă çĕрте ĕçлерĕ, халĕ михĕсем тума сӳс арлать.

Çамрăк ачасем валли те бригадăра ĕç çителĕклĕ. Акă 14 çулти Александр Иванов, 13 çулти Евгений Андреев тăтăшах ĕçлеççĕ. Хĕллехи вăхăтра шкултан таврăнсан вĕсем кĕл, кайăккĕшĕк тислĕкĕ пухнă, халĕ тислĕк тăкаççĕ, çум çумлаççĕ. Ĕçчен çамрăксен хăйсене кура ĕçкунĕсем те сахал мар. Иванов 90 ĕçкунĕ, Андреев 60 ĕçкунĕ тунă та ĕнтĕ.

Бригада паянхи куна 47 гектар çинчи калчасене çумкурăксенчен пĕрремĕш хут тасатнă, халĕ колхозниксем кок-сагыз акнă пусса çумлаççĕ. Кĕрхи тырăсем акмалли пусса 830 лав тислĕк кăларнă, ирхи çĕртме сухине пĕтĕмĕшпех туса çитернĕ. Çаксемпе пĕрлех бригада утă çулма тухма хатĕрленет. Ĕç хатĕрĕсене юсаççĕ, туптаççĕ.

Степанова юлташ хăйĕн бригадинче колхозниксемпе агитаци ĕçне те лайăх йĕркеленĕ. Кăçал бригадăри колхозниксемпе 6 пуху туса ирттернĕ, вĕсенче бригадăн ĕçĕсем çинчен, партипе правительство постановленийĕсене пурнăçа кĕртсе пырасси çинчен сӳтсеявнă. Юлашки пухура колхозниксем «Путь крестьянина» колхоз членĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă. Ку чĕнĕве бригадăри кашни колхозник ырласа йышăнчĕ, социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Иртнĕ çул бригада вăтам шутпа гектартан 17-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Кăçал колхозниксем татах та тухăçлăрах тырпулшăн кĕрешĕве тухрĕç.

С. ШАДИН.

ШĂХАСАН, (Хамăр корр.).

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри пекарньăра ĕçлекенсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума 2.000 тенкĕ ытла укçа пухнă. Кунта ку тĕлĕшпе Мостовая агитатор аван ĕçленĕ. Пекарньăра ĕçлекенсем — фронтовиксен арăмĕсем Брытвина, Воробьева, Богомолова юлташсем 50-шар тенкĕ панă. Смирнов, Кондратьев рабочисем те самолетсен звенине тума 50-шар тенкĕ хывнă. Софронова Разин пекарьсем укçисене çавăнтах парса татнă.

Т. МАЧУЛКА.

* * *

СĔНТĔР. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă май тата Совет Союзĕ — Валикобританипе договор, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствипе килĕшӳ тунине сӳтсе-явнă май, районри ĕçсыннисем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа-тенкĕ татах та ытларах хываççĕ.

Июнĕн 21-мĕш тĕлне районри колхозниксемпе интеллигенци пурĕ 49.000 тенкĕ банка хывнă.

«Родник» колхозра укçа-тенкĕ пухас ĕçе отечественнăй аслă вăрçăн участникĕ, коммунист Суворов ертсе пырать. Вĕсем 8.000 тенкĕ пухса банка леçнĕ. 60 çулти колхозник Суворов тата Ф. Яндушкин самолетсен звенине тума 80-шар тенкĕ панă.

«Çĕнĕ Юнга» колхозра та укçа пухасси организованно пырать. Ку ĕçе колхозниксем активлăн хутшăнаççĕ.

Г. ГУСЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа пухаççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем самолетсен звенине тума 1330 тенкĕ укçа пухса пачĕç. Çавăн пекех «Чăваш Коммуни» колхоз членĕсем те самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума 550 тенкĕ, «Знамя Ленина» колхоз членĕсем 300 тенкĕ пухса панă.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

СССР ĕçсыннийĕсем тăван çĕршывăн оборона фондне 2 миллиард та 740 миллион тенкĕ хывнă

Тăван çĕршывăн оборона фондне ăна тума пуçланăранпа кăçалхи июнĕн 1-мĕшчен ĕçсыннисем 2.740.000 тенкĕ хывнă.

Кунсăр пуçне, 94 килограмм ылттăн, 11,5 килограмм платина, 9.000 килограмм кĕмĕл, 1.165 пин тенкĕлĕх хаклă япаласем, пирĕн укçапа шутласан 7.547 пин тенкĕ чухлĕ ютçĕршыв укçисем. 2.163 миллион тенкĕлĕх государство заемĕн облигацийĕсене тата перекет кассисенче усранакан 35 миллион тенкĕ укçана панă. (ТАСС).

ПĔЧĔК ФЕЛЬЕТОН

Гессăн телейлĕ кунçулĕ

Англири хупса усрамалли çуртсенчен пĕринче тĕнчере чи кулăшла майпа тыткăна лекнĕ çын ларать. Ун тавра шанчăклă хурал тăратнă. Çак çын вăл — Гесс. Пирĕн вăхăтри çавтери драмăлла событисем хушшине ăна çавтери кулăшла мыскара кĕртсе яма тӳрĕ килсе тухрĕ. Кам пĕлет, тен вăл гитлерпа пурăнса ирттерекен пĕртен пĕр паллă гитлеровец пулĕ. Англире вăл консервă банки ăшĕнче ларнă пекех ларать, вăрçă пĕтнĕ хыççăн вара ăна лайăх сыхланса юлнă фашистăн пĕртен пĕр экземплярĕ вырăнне кăтартма пулĕ.

Çакăнпа пĕрлех Гесс — совет çĕршывне хирĕç çавтери паллăн пуçласа янă гитлерла «хĕреслĕ поход» питех те намăсла путланса ларнине кăтартса паракан пĕртен пĕр чĕрĕ памятник те пулса тăрать. Çав камитле ирсĕр мыскараран мĕн тăрса юлчĕ-ха ĕнтĕ? Пĕр Гесс кăна — Англи читлĕхĕнче ларакан нимĕçсен фашистла кайăкĕ кăна тăрса юлчĕ.

Пĕр çулталăк каярах вăл «хĕреслĕ поход» пуçласси çинчен англичансене пĕлтерес тесе тата Англипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене пире хирĕç çĕклес тесе, пĕлĕтрен Шотланди çĕрĕ çине анса ларнă. Анчах та çӳлти тĕнчерен çавăн пек анса ларни çавтери кулăшла та ăнăçсăр вĕçленнĕ. Гесс Англире ухмах çынсене тупайман. Вăл хăй тата унăн пуçлăхĕ ухмахра тăрса юлчĕç.

Гесса Англире çепĕç пăхса усраççĕ. Ăна вуламашкăн Гитлерăн ĕçĕсем пирĕн çĕршывра путланса ларнине çырса кăтартакан Англи хаçачĕсене параççĕ. Çакă вăл фашистла ватă кашкăршăн пите те çăмăл тата чиперех тӳссе ирттермелли асап пулса тăрать. Анчах вăл июнĕн 12-мĕшĕнчи куна начар тӳссе ирттернĕ. Çав кун вăл Молотов Лондонпа Вашингтона кайса çӳрени çинчен, Англипе Совет Союзĕ хушшинче договор туни çинчен тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе ССР Союзĕ хушшинче килĕшӳ туни çинчен пĕлнĕ.

Гесс хăйĕн кунçулĕ пирки ӳпкелешме пултараймасть. Вăл начар мар вырнаçса ларчĕ. Унăн фашистла тусĕсем чылайĕшĕсем, паллах, унăн пурнăçне ăмсанаççĕ. Сăмахран, Дарре. Пурте пĕлеççĕ, Даррене арестленĕ, вăл халĕ ĕнтĕ Гиммлерăн çăри айĕнче ларать. Паллах, вăл Англи тĕрминче ларма ытларах килĕштернĕ пулĕччĕ. Чăн та, çакă вăл, нимĕç фашисчĕсен куçĕпе пăхсан, ытлашши патриотла ĕçех мар, анчах пурнăçпа сывлăхшăн çакă вăл ну май вырăнлăрах.

Гитлерла бандитсем ăçта та пулин тарса хăтăлма вырăн шыраса пĕр енчен тепĕр еннелле вăркăнма тытăнас кун çывхарса килет. 1918 çулта кайзер Вильгельм II Голландие тарса пытаннă. Гитлерпа унăн бандине ниçта тарса пытанма та çук. Çĕр чăмăрĕн кирек мĕнле кĕтесĕнче те вĕсене кураймалăхпа тавăру хаярлăхĕ кĕтет. Англири хӳтлĕхре ларакан Гесс, ун чухне, тен, чĕен кулкаласа çапла калĕ: мана пĕтĕм тĕнче çавтери айван камит тесе шутлать, анчах та эпĕ умрине малтанах витĕр курса тăракан пĕртен пĕр ăслă фашист пултăм... тейĕ.

Д. ЗАСЛАВСКИЙ.
(«Правда», июнĕн 24-мĕш).

Гитлерла захватчиксен шанчăкĕсем ишĕлни

[illegible]ЛЬМ, июнĕн 2[illegible]-мĕш. (ТАСС). Гитлерла хаçатсем Германи халăхне Германире продовольстви лару-тăрăвĕ Украина тырпулне илнипе лайăхланма пултарас шанчăка шăрахма ӳкĕтлеççĕ. Хаçатсем нумайĕшĕсем продовольствипе ялхуçалăх министерстви ярса панă статьяна пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: «Украина нимĕç халăхĕн лару-тăруне çăмăллатма пултарĕ тесе шухăшлани пачах та йăнăш шухăш. Украинăра лайăх тырпул пулассине кĕтме çук. Украинăра ĕç вăйĕ çитмест, ялсенче хĕрарăмсемпе ачасем кăна тăрса юлнă. Хамăра валли апат-çимĕç тупасси пĕтĕмĕшпех Германи хресченĕсенчен килет, Украина тĕлĕшпе кирек мĕнле хавасланса калаçассине те пăрахăçа кăлармалла».

«Кракуэр цейтунг» хаçат, «украинецсене нимĕçсемшĕн ĕçлеттерме питĕ йывăрри» çинчен йышăнса çапла çырать: «Кăçалхи çул Украинăра йĕркеллĕ тырпул пулассине кĕтме çук, мĕншĕн тесен унта тĕрлĕ ырă мар япаласем пур». Гитлерла хаçатсем ялхуçалăхĕнче машинăсем, горючи, вăрлăхсемпе удобренисем çуккишĕн ӳпкелешеççĕ. «Украина ялхуçалăхĕпе промышленноçĕнчен нимĕнле ӳсĕм те кĕтме çук», — тесе çырать «Нейе таг» хаçат.

Украина çĕрĕсемпе усă курма ĕмĕтленнисем пĕтĕмпех путланса ларнине курса, нимĕç вăрă-хурахĕсем оккупациленĕ совет районĕсенче пурăнакан çынсенчен юлашки апат-çимĕçсене шăлса тухса каяççĕ. «Кракуэр цейтунг» хаçат июнĕн 13-мĕшĕнче: «Украинăран 30 пин тонна пăрçа, кĕвелçаврăнăш, урпа, вир, кукуруза, люцерна тата клевер ăсатнă», тесе пĕлтерет. Малалла хаçат: нимĕçсем «Украина хресченĕсенчен çу кăлармалли культурăсемпе пăрса йышши культурăсен мĕнпур запасĕсене туртса илнĕ», тесе кăтартса парать.

Америкăра çар нушисем валли 228 миллиард доллар памалла ту[illegible]ă

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче çар нушисем валли июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçланакан çĕнĕ бюджет çулĕнче çĕнĕрен 42 миллиард та 823 миллион доллар памалла тунă. Америка парламенчĕн пĕр палатинче (представительсен палатинче) çавăн чухлĕ укçа-тенкĕ парассине çирĕплетнĕ те ĕнтĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче, маларах панă укçа-тенкĕпе пĕрле илсе шутласан, пĕтĕмпе çар нушисем валли 228 миллиард доллар расход тухать.

Америка çарĕн интендантски службин начальникĕ генерал Сомервел çапла каланă: кăçал Америка çарĕн йышне 3 миллион та 600 пин çынна çити ӳстереççĕ, килес çулăн çурри çитнĕ тĕле 4.500 пин çынна çитермелле.

Америкăн сывлăш çар вăйĕсен командующийĕ генерал Арнольд каланă тăрăх, Америкăри заводсем 1942—1943 çулсенче çар валли сахалтан та 148 пин самолет туса кăлараççĕ. (ТАСС).

Англин çар расхочĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, финанс министрĕ общинăсен палатинче çапла каланă: Англин çар расхочĕсем çулталăк хушшинче 5.286 миллион кĕрепенке стерлинг пулмалла. Вăл шутран 4.500 миллион кĕрепенке стерлинг çар нушисене витме каймалла. (Ку хисепе Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен хĕçпăшалсене кивçен е арендăна памалли закон тăрăх илекен пулăшу кĕмест).

Англия кашни кун çар ĕçĕ валли 14.500 пин кĕрепенке стерлинг расходлать.

Венгрипе Румыни хушшинчи лару-тăру çивĕчленни

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Венгрипе Румыни хушшинче хирĕçӳсем çавтери çивĕчленсе çитнĕ. Юлашки вăхăтра вĕсем хушшинче кашни сехетрех хĕçпăшаллă тытăçусем пуçланса каяссине те кĕтме пулать.

Будапештран уйрăм çынсем пĕлтернĕ тăрăх, темиçе çĕр венгереца Трансильванин Румыни аллинчи пайĕнчен хăваласа янă пирки, унта Румынине хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ÇУРÇĔР ФРАНЦИ ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла «Бостон» йышши бомбардировщиксем, «Спитфайр» самолетсем хӳтĕлесе пынипе, Дюнкеркри доксем çине çĕнĕрен тапăннă. Бомбăсем тӳрех доксемпе пристаньсем çине ӳкни паллă пулнă. Самолетсем хăйсен базисене пурте тĕрĕсех таврăннă.

Çав кунах каçхине Англи авиацийĕ противникăн Бретаньри аэродромне атакăланă.

Июнĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем тăшманăн шывĕсем çине минăсем лартса хăварнă. Истребительсем противникăн аэродромне тата Голландипе Çурçĕр Францири чугунçулсене атакăланă.

Çав каçхине противникăн йышлă мар самолечĕсем Англин çыранри районĕсем çинче курăннă, вĕсем пăрахнă бомбăсем сиен туман. Жертвăсем пулман. Тăшманăн пĕр бомбардировщикне персе антарнă.

ЛИВИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсем Тобрука тытса илнĕ хыççăн, халĕ Египет чиккисем еннелле наступлени туса пыраççĕ. Анчах тăшманăн Тобрука тытса илнипе усă курма тытăнма сахалтан та икĕ эрне кирлĕ. Халĕ Египета хăрушлăх тӳрремĕнех хăратса тăни çинчен калама çук-ха.

(ТАСС).

Пĕлтерӳ

1924-мĕш тата 1925-мĕш çулсенче çуралнă призывниксене çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: кăçалхи июнĕн 27-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Крупская ячĕпе тăракан садра, ВКП(б) Хула Комитечĕпе хула Военкомачĕ хулари призывниксен конференцине пухаççĕ. Кун йĕркинче пĕр ыйту:

«Призывникăн призыва хатĕрленесси тата производствăра ĕçлесси».

Конференцие йыхрав билечĕсемпе кĕртеççĕ. Билетсемпе пĕрле приписка туни çинчен калакан свидетельство пулмалла.

ВКП(б) Хула Комитечĕ,
Хула Военкомачĕ.

Ответлă редакторшăн А. А. ЭСХЕЛЬ.

ПРОПАЛИ

с пастбища 16 июня 1942 года три лошади-кобылицы, принадлежащие артели «Пекарь». Приметы следующие: две лошади — гнедой масти, одна — темносерой, на лбу седина. Знающих их местонахождение просим сообщить по адресу: гор. Чебоксары, Интернациональная, 2, артели «Пекарь».

КОНТОРЕ СЕЛЬХОЗСНАБЖЕНИЯ НАРКОМЗЕМА ЧУВАШСКОЙ АССР ТРЕБУЮТСЯ:

главный бухгалтер и начальник планово-финансового отдела.

Предоставляется КВАРТИРА.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Калинина, № 34. Телефон 0-94, один звонок.

ЧУВАШСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ НКЗ СССР
объявляет прием студентов на 1942—1943 учебный год

на первый курс агрономического и зоотехнического факультетов. Институт готовит специалистов высшей квалификации по сельскому хозяйству—агрономов и зоотехников. Окончившие институт специалисты направляются на работу НКЗемом СССР.

В институт принимаются граждане СССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование.

Заявления о приеме подаются на имя директора по адресу: Чувашская АССР, гор. Чебоксары, ул. Калинина, № 34.

К заявлению прилагаются следующие документы:

1. Автобиография.
2. Аттестат об окончании средней школы (в подлиннике).
3. Паспорт (пред'являются лично).
4. Три фотокарточки.
5. Справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных).

Учащиеся, окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 гг. на «отлично» и «хорошо», принимаются в институт без испытаний.

При наличии к концу приема свободных вакансий без испытаний принимаются все окончившие средние школы в 1941 и 1942 гг.

Лица, поступающие в институт с испытаниями, держат таковые по: 1) русскому языку и литературе, 2) физике и 3) химии.

Заявления о поступлении в институт принимаются до 1 августа 1942 года.

Срок обучения в институте 3 года.

Отличники средней школы, лица, сдавшие два приемных испытания на «отлично» и одно не ниже «хорошо» и студенты, получившие на экзаменационной сессии в институте 2/3 оценок «отлично» и 1/3 «хорошо», а также участники отечественной войны, демобилизованные из Красной Армии по болезни, получают стипендию.

Особо нуждающиеся стипендиаты, а также дети пенсионеров и военнослужащих рядового и младшего начальствующего состава, а также участники отечественной войны, демобилизованные из Красной Армии по болезни, освобождаются от платы за обучение.

Учебники и учебные пособия предоставляются всем студентам бесплатно из библиотеки института.

При институте имеется студенческое общежитие с постельными принадлежностями и закрытая студенческая столовая.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 834 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 31[illegible] Ф. 6. 58 64 [illegible]